А. Алга

## САВĂНĂÇ

Ак çапла, хĕвеллĕ çиçтĕр савăнăç!
Кун пуçлантăр хавха хыпартан.
Çĕр тавра иккен çаврăнĕç-явăнĕç,
Çĕнĕ шухăш тытса, паянтан.
Пĕри пирĕн маттур Николаев,
Севастьянов—ун тусĕ. «Вĕсен
Çулĕ пултăрччĕ ăнăçлă, лайăх»,
Ыр сунать ырă çын чĕререн,
Ир çинче çиçĕмрен те хăватлăн
Çĕрелле варкăшса юлчĕ вут.
Николаев, Унтри, Çул хыватăн
Космосра ĕнтĕ иккĕмĕш хут.
Таврара кăчăк туртнă пек, йăлтăр
Çăлтăрсем илĕртеç-тĕр сана.
Чи илемлĕ Планетăмăр çăлтăр
Куçăнтан илĕнмест-тĕр—сана!
Ир те каç чарăнми вĕçнĕ майăн,
Пирĕн чаплă ентеш, космоиавт,
Ху çуралнă тĕптен иртсе кайăн,
Ун çинчен шухăшла пĕр самант.
Халь кунта-çке хир-улăх сип-симĕс
Вăрмансем те садсем чечекре,
Тăван Атăл—пулас аслă тинĕс.
Хумĕ евĕр, хастар ĕмĕтре.
Тăрăшать ĕçĕнче тăван халăх
Чап кўрсе хулине те ялне,

Вăл хатĕрленет—асăнмалăх
Ирттерме Аллă çул уявне.
Туслăхра халăх савăнăс тунă.
Ленин панă хĕвеллĕ кунран
Паттăр ўсрĕ хĕр-ывăлĕ унăн,
Вĕçрĕ вĕçĕмсĕр космос таран...
Вĕçĕр, вĕçĕр, мухтавлă Çĕршывăн
Ăмăрткайăкĕсем ярăнса!
Çĕр çине çаврăнса килĕр сыввăн
Сире халăх кĕтет савăнса.

*Алга, А. Савăнăç / А. Алга // Коммунизм ялавĕ. – 1970. – 2 июнь.*